26-мěш çул тухать. Хакě 20 пус.

1943
ОКТЯБРЬ
3
ВЫРСАРНИКУН
197(6434) №

Чăваш Коммуни

Пěтěм тěнчери пролетарисем, пěрлешěр!

ВКП(б) ОБКОМĚПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĚН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĚН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĚН ХАÇАЧĚ

Совет Информаци Бюровěнчен

ОКТЯБРĚН 1-МĚШĚНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Октябрěн 1-мěшěнче МОГИЛЕВ енче пирěн çарсем çаплах наступлени туса пынă, 10 километртан пуçласа 20 километр таран малалла куçнă. СОЖ шывě урлă каçнă та ЧЕРИКОВ хулине тытса илнě, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 340 пункта тытса йышăнса илнě. Вěсен шутěнче Могилев облаçěнчи КРАСНОПОЛЬЕ ятлă район центрě, РЯСНА, СТАРИНКА, МОЛЯТИЧИ, ЗАБОЛОТЬЕ, ГРАБАЛОВА, БАЕВКА, КОМАРОВКА, ЮРКОВКА, ГУБЕНЩИНА, КОСТЮШКОВИЧИ, РЕЧИЦЫ, ВЕПРИН, БАКУНОВИЧИ, ГОРОДЕЦКАЯ, ЯЧНАЯ БУДА ятлă пунктсене тата ОСОВЕЦ ятлă чугун çул станцине тытса илнě.

ГОМЕЛЬ енче пирěн çарсем çапах наступлени туса пынă, уйрăм участоксенче 10 километртан пуçласа 15 километр таран малалла куçнă, халăх пурăнакан 100 пункта тытса илнě. Вăл шутра ХОЛМЫ, КОЗЕЛЬЕ, МИХАЛИЧИ, ВЫДРЕНКА, КОЛЮДЫ, ПЕРЕЛАЗЫ, ФОШНОЕ, БУДИЩЕ, НИСИМКОВИЧИ, БАБИЧИ, ФЕДОРОВКА, МОГИЛЕВКА, ПЕТРОПОЛЬЕ, СЕЛИЩКОЕ, РУДНЯ, ШЛЯГИ ятлă халăх пурăнакан пунктсене тытса илнě.

ВИТЕБСК енче пирěн çарсем çапла наступлени туса пынă, халăх пурăнакан 20 пункта тытса илнě. Вăл шутра МАТЮХИ, ШИТИЛОВО, БЕРЕЗИНО ятлă пысăк пунктсене тытса илнě.

Сентябрěн 30-мěшěнче пирěн çарсем мěнпур фронтсенче нимěçсен 79 танкне пересе çěмěрнě е пěтерсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитлă артиллери тăшманăн 59 самолетне пěтерсе укернě.

* * *

Могилев енче пирěн çарсем çапах наступлени туса пынă. Пěр соединени, нимěçсен тăшманăн хаярран хирěç тăнине çěмěрсе, Сож шывě урлă каçнă та [illegible] Чериков хулине тытса илнě. Кун каçиччен çапăçса нимěçсен фашистла оккупанчěсенчен 340 пункта тытса ирěке кăларнă. Тепěр участокра пирěн çарсем Проня шывě патне тухнă. [illegible] Кун каçиччен нимěçсен 2.000 салтакěпе офицерне çити пěтерсе тăкнă. Трофейсем тытса илнě. Вěсен шутěнче 26 тупă, миномётсен 4 батарейи, 200 пулемет, [illegible] тата 150 автомашина пур. Нимěçсен 200 салтакěпе офицерне тыткăна илнě.

Гомель енче пирěн çарсем çапах наступлени туса пынă. Тăшман, темěн чухлě дотпа дзот туса тултарнă оборона линийěне усă курса, хаяррăн хирěç тăрать. Пěр соединени [illegible] нимěçсен оборонине татса кěнě те халăх пурăнакан [illegible] пунктсене тытса илнě. Тăшман 1.000 салтакěпе офицерне пěтерсе тăкнă. Боеприпассен пысăк складне, продовольстви складне тата ытти трофейсем тытса илнě. Гомельтен кăнтăртарахра пирěн чаçсем нимěç пехотин батальонне пěтерсе тăкнă. 12 тупă, 14 миномет тата боеприпассем турттарса пыракан 40 лаша тытса илнě.

Витебск енче тăшман, артиллерипе пересе тата контратакăсем туса, совет çарěсене малалла куçса пынине чарма хăтланнă. Пěр соединени чăсěсем, хаяррăн çапăçса, гитлеровецсене [illegible] хăваласа кăларнă. Тăшман çапăçу хирěнче 1.500 çынна çити пěтерсе хăварнă. [illegible] 3 артиллери батарейне тытса илнě. Тепěр участокра [illegible] çапăçнă. Пирěн боецсем [illegible] тăшмана [illegible] нумай тăрса юлнă.

* * *

Хěрлě ялавлă Балтика флочěн торпедоносецсем-самолечěсем Балтика тинěсěнче нимěçсен пěтěмпе 15 пин тонна водоизмещениллě икě транспорт тата тăшманăн 3 пин тонна водоизмещениллě пěр транспорт путарнă. Хура тинěс флочěн авиацийě тăшманăн 4 катерне, 3 баржине, 2 мотоботне тата турттарса пыракан 4 шлюпкине путарнă.

* * *

Белоруссири партизансем Гомель облаçěнчи районсенче пěринче кěрешекен темиçе отрячě сентябрěн 10-мěшěнчен 20-мěшě хушшинче нимěçсен 79 çар эшелонне [illegible] кěрешсе-[illegible] взрывсемпе [illegible] автомашини [illegible].

семпе танксем турттарса пыракан 85 платформа, боеприпассем тиенě 90 вагон, горюче тултарнă 47 цистерна тата тěрлěрен çар грузěсем турттарса пыракан 200 вагон тытса çěмěрнě.

* * *

Нимěçсен 217-мěш пехотнăй дивизийěнчи 217-мěш артиллери полкěнчен тыткăна илнě обер-ефрейтор Лео Зелмюллер çапла каласа панă: «Пирěн дивизие васкаса Луга хулинчен Киев районне илсе килчěç те çул çинченех çапăçăва кěртсе ячěç. [illegible] Эпир вырăн хăтлатса [illegible]. Нумай тăрмашрăмăр, анчах [illegible] Офицерсем [illegible] каялла чакма [illegible]».

* * *

Нимěçсен фашистла захватчикěсем Сумы облаçěнчи Н. Сыроватка ялěнчи çынсем Виктор Клименко, Иван Коломиец тата Василий Занерко çапла каласа панă: «Нимěçсем пирěн яла 1941-мěш çулхи сентябрь уйăхěнче йышăнчěç. Вěсем малтанхи кунсенчех фашистла «çěнě йěрке» тултарса хучěç. Çаратма, вěлерме тата совет гражданисенчен вěçě-хěррисěр мăшкăлама тытăнчěç. Гитлеровецсем темиçе вунă колхозника пересе е çакса вěлерчěç. [illegible] Германие каторгăлла ěçе хăваласа кайрěç. [illegible] Гитлеровецсем [illegible] колхозниксен [illegible] Вěсем [illegible] «Жовтень» клубне [illegible] Маркс ячěпе [illegible]. Культура паркне нимěçсем салтаксен масарě туса хучěç. Хěрлě Çар пыра-пыра çапăçнă вăхăтра чакма пуçласан, нимěçсем фашистла [illegible] çунтарса [illegible] ».

Пирěн авиаци Витебск, Орша, Могилев, Джанкой чугун çул узелěсене тата тăшманăн аэродромěсене тапăнни

Октябрěн 1-мěшě ырăн тěне хус çěрле пирěн авиаци нимěçсен Витебск, Орша, Могилев, Джанкой чугун çул узелěсене çине бомбăсем пăрахнă. Бомбăсем чугун çул çинче, пирěн эшелонсенче çар техники тиенě вагонсем, горюче тултарнă цистернăсем тата пысăк склачě [illegible] пушарсем тухнă, пушарсене темиçе вăйлă [illegible].

Çав каçхинех пирěн авиаци нимěçсен самолечěсем пухăнса тăнă аэродромне тапăннă. Бомбăсем пăрахнă вырăнта нимěçсен темиçе самолечě [illegible]. Пěр аэродромра бомбăсем тÿрремěнех [illegible] тата горюче склачне [illegible].

Пирěн икě самолет хăйсен базисене [illegible].

Аслă Октябрь 26 çул тултарнине производствăра çěнě çитěнÿсем тунипе кěтсе илер

Мускав облаçěнчи Коломна районěнчи ялхуçалăх работникěсем Мускав, Архангельск, Вологда, Горький, Иваново, Калинински, Кировски, Орел, Рязань, Смоленск, Тула, Ярославль облаçěсенчи, Мари, Тутар, Чăваш тата Коми АССР-ěсенчи колхозниксемпе колхозницăсене, МТС-семпе совхозсен работникěсене тата ялхуçалăх специалисчěсене

ЧĚНСЕ КАЛАНИ

Хаклă юлташсем!

Пирěн советлă тăван çěршыв нихăçан асран кайми савăнăçлă кунсенче пурăнать. Хěрлě Çарăн паттăр полкěсем, генилле полководец аслă Сталин çул кăтартса ертсе пынипе, малалла, хěвеланăçнелле çěнтерÿллěн пыраççě, хуласемпе пиншер ялсене ирěке кăлараççě, совет çыннисене ирěклě пурăнăç таврăнса параççě.

Харьковпа Брянск, Таганрогпа Сталино, Мариупольпе Новороссийск, Чернигов, Полтава, Смоленск тата ытти нумай хуласем çинче каллех совет ялавě вěлкěшсе тăрать. Нимěçсен фашистла войскисене Донбасран хăваласа кăларнă. Хěрлě Çар Днепр хěррине пырса тухрě.

Сталин юлташ пирěн войскăсен çěнтерěвěсем çинчен пěлтерсе панă приказсем халăх асěнче ěмěрлěхех юлěç. Юратнă Хěрлě Çарпа савăнса тата мухтанса, эпир Мускавăн хăватлă салючěсене итлетпěр.

Паттăр фронтовиксемпе танлашас тесе, эпир, Мускав облаçěнчи Коломна районěнчи колхозниксемпе колхозницăсем, МТС-семпе совхозсен работникěсем, агрономсемпе зоотехниксем, çапла калатпăр: вăрçă пырать пулсан, вăрçă интересěсемпе çĕс пурăнмалла, юратнă çулпуç тата полководец Сталин юлташ Хěрлě Çара пулăшассине пур майсемпе те вăйлатса пыма хушнине пурнăçа кěртмелле.

Вăрçă кунěсенче пирěнтен никам та начар ěçлеме тивěçлě мар. Коломна районě ялхуçалăх ěçěсене пурне те кăçал пěлтěрхинчен лайăхрах туса пырать. Уйхирсенчен начар мар тырпул пухса илнě.

Халě, облаçра иртекен фронтовой икěрнелěхе хутшăнса, эпир лайăх ÿснě çěрулмипе пахча-çимěçсене пухса кěртетпěр, çак ěçе кěске вăхăтра тата пěр тăккаламасăр туса ирттеретпěр.

Колхозсем государствăна тырă срокчен тата пěтěмěшпех парса татассě.

Хěрлě Çар ăнăçлă наступлени тунă вăхăтра эпир фронта пулăшассине татах та вăйлататпăр.

Районри колхозсем хатěрлев пункчěсене 152.500 пăт çěрулмипе пахча-çимěç сутса леçсе пачěç.

Районри колхозсем обществăллă выльăх-чěрлěх хисепне йышлатас тата унăн тухăçлăхне ÿстерес енěпе тимлěн ěçлеççě. Выльăхсене валли шултăра апатсемпе сěтеклě апатсем çителěклěх хатěрлесе хунă. Выльăхсене хěл каçарма çине тăрса хатěрленетпěр: витесене юсаса ăшă тытакан тăватпăр, выльăх-чěрлěхěн ытти çуртйěрěсене те юсатпăр. Çураки вăхăтěнче облаçра малти вырăна тухса, районри колхозсем выльăх-чěрлěх ěрчетес енěпе пыракан ăмăртура та пěрремěш вырăн йышăнасси-шěн кěрешме шут тытрěç.

Нимěç оккупанчěсенчен ирěке кăларнă Верейски районри колхозсемпе колхозниксене тăванла пулăшу парса, эпир 500 пăру, 85 вăкăр, 50 сурăх тата 600 сысна çури ярса патăмăр.

Можайск хулине тата Можайск районěнчи колхозниксен çурчěсене юсама Коломна районěнчи ěççыннисем пиншер тенкěлěх строительство материалěсем ярса параççě.

Пирěн тăван çěре пěр нимěç захватчикě те пулин таптать пулсан, пирěнтен никам та тунă çитěнÿсемпе лăпланса ларма пултараймасть, çакна эпир ăнланатпăр.

Октябрьти социализмлă аслă революци пулнăранпа 26 çул тултарнин чаплă уявě çывхарса килет. Çав уява эпир производствăра çěнě çитěнÿсем тунипе палăртма шут тытрăмăр тата хамăр çине çакăн пек обязательствăсем илтěмěр:

1. Ноябрěн 1-мěшě тěлне государствăна тырпул, çěрулми, пахча-çимěçсем тата ытти ялхуçалăх продукчěсем пěтěмěшпех парса татмалла.

2. Государствăна хатěрлев хакěсемпе 530 пин пăт çěрулми тата пахча-çимěçсем сутмалла.

3. Октябрěн 10-мěшěнчен кая юлмасăр çěрулмипе пахча-çимěçсене пухса турттарса кěмелле тата вěсене хранилищěне тирпейлесе хумалла. Каярах пулакан сортлă купăстана октябрěн 5-мěшě тěлне пухса кěмелле.

4. Октябрěн 15-мěшě тěлне вăрлăхлăх акнă клевере çапса тата шěкěлчесе пěтермелле, çавăн пекех ытти культурăсене те çапса пěтермелле.

5. Октябрěн 25-мěшěнчен кая юлмасăр кěрхи çěртме планне тултармалла. Кěрхи çěртме тумалли участоксене вырăнти удобренисем тăкассине организацилемелле.

6. Выльăх-чěрлěх çурчěсене пурне те вăхăтра юсаса, хěл лариччен ăшă тытакан туса хатěрлесе çитермелле. Выльăх витисем патне хěл пуçланиччен сахалтан та выльăх апачěн виççěмěш пайне турттарса хумалла.

7. Ноябрěн 1-мěшěнчен кая юлмасăр ялхуçалăх инвентарěсене пурне те пухса МТС килкартине, совхозсемпе колхозсен килкартисене илсе пымалла. Вěсене тасатса, сěрсе лартмалла, тракторсемпе ялхуçалăх машинисене кěркуннепе хěллехи вăхăтра юсас ěçе сарса ямалла.

Эпир çак обязательствăсене пурне те пурнăçа кěртетпěр, тесе çирěппěн шантаратпăр. Пирěн ěç Хěрлě Çарăн аслă çěнтерěвěсене тивěçлě пултăр. Эпир хамăрăн социализмлă обязательствăсене пурнăça кěртни совет çěрěсене фашистла захватчиксенчен ирěке кăларакан паттăр Хěрлě Çара ěçпе салют пани пултăр.

Хаклă юлташсем—колхозниксемпе колхозницăсем, МТС-семпе совхозсен работникěсем, ялхуçалăх специалисчěсем! Октябрьти социализмлă аслă революци пулнăранпа 26 çул тултарнин чаплă уявне производствăра çěнě çěнтерÿсем тунипе кěтсе илер, тăван Хěрлě Çара вăйлăнрах пулăшар!

Пирěн ěç колхозлă хресченсем паттăр Хěрлě Çара, юратнă совет çěршывне, большевиксен партине, колхозниксен ашшěне—тăван Сталина вěçě-хěррисěр юратса тав тунине палăртса тăтăр.

Колхозра хамăрăн вăя шеллемесěр ěçлесе, ылханлă тăшмана пěтěмпех çěмěрсе тăкас сехете çывхартма пулăшар.

Сывă пултăр пирěн никам çěнтереймен Совет çěршывě!

Сывă пултăр пирěн паттăр Хěрлě Çар!

Сывă пултăр ССР Союзěнчи халăхсен çулпуçě, Хěрлě Çарăн генилле полководецě тата пирěн çěнтерÿсен организаторě аслă Сталин!

Мускав облаçěнчи Коломна районěнчи колхозниксем, совхозсемпе МТС-сен работникěсем хушнипе алă пуснă:

И. Ф. Абрамов—ВКП(б) Коломна райкомěн секретарě, **Т. Г. Ястребов**—райсовет исполкомěн председателě, **И. С. Платонов**—райçěрěç пайěн заведующийě, **К. Г. Кузнецова**—Малышево ялěнчи колхоз председателě, **С. З. Коротков**—Зарудня ялěнчи колхоз председателě, **С. В. Бакин**—Маливо ялěнчи колхоз председателě, **И. Е. Турков**—райçěрěç пайěн главнăй агрономě, **И. С. Стариков**—Макшеевски ялсоветěн председателě, **И. З. Каретников**—Макшеевски парторганизаци секретарě, **С. И. Красавин** — Хорошевски МТС директорě, **К. Ф. Шолина**—Малышево ялěнчи колхозри çамрăксен звенин звеньевойě, **А. Ю. Загорникова**—ВЛКСМ райкомěн секретарě, **И. В. Данилин**—Хорошевски МТС старши механикě, **И. С. Селезнев**—Горьковски ялсоветěн председателě, **С. И. Любишев**—«Возрождение» совхозăн директорě, **Г. Л. Кузнецов**—Стинский парторганизаци секретарě, **Е. М. Бударева**—Черкизово ялěнчи колхоз председателě, **Д. И. Сысоев**—райçěрěç пайěн старши ветврачě, **К. И. Найденова**—Северское ялěнчи колхоз председателě, **Д. П. Хорохорин**—райçěрěç пайěн старши зоотехникě, **И. И. Печенов**—Непецински ялсоветěн председателě, **С. Г. Алискин**—Мячково ялěнчи колхоз председателě, **М. З. Борисенко**—Кировски МТС директорě, **А. И. Королева** — Настасьино ялěнчи колхоз председателě, **И. С. Аманов**—Коломна МТС старши агрономě, **И. Д. Макаров**—Городище-Юшково ялěнчи колхоз председателě, **С. И. Триеров**—Непецино ялěнчи колхоз председателě, **К. Д. Рождественский** —Василёво ялěнчи колхоз председателě тата ыттисем те.

Пěр завод работникěсем Чăваш республикинчи предприятисенчи мěнпур рабочисемпе работницăсене, инженерла-техникла работниксене тата служащисене

ЧĚНСЕ КАЛАНИ

Хаклă юлташсем!

Отечественнăй аслă вăрçă фрончěсенчен савăнăçлă хыпарсем килеççě. Гитлерпа унăн йытă кěтěвě 1943 çулта çуллахи наступленире татăклă çěнтерÿ тума, Курск хулине йышăнса илсе Мускав çине çěнěрен тапăнса килме шутларěç. Анчах çав тăмсай стратегсем пирěн тăван çěршывăн хăватне, Хěрлě Çар воинěсен паттăрлăхне тата тылри ěççыннисен хастарлăхне шута илмен. Белгородпа Орел хулисем хыççăн пирěн тăван çěршыва вуншар хуласемпе пиншер ялсене каялла таврăнă. Донец бассейнě, Харьков, Чернигов, Брянск, Полтава, Смоленск хулисем ěмěрлěхех совет хулисем пулса тăчěç. Хěрлě Çар гитлеровецсене пур фронтсенче те кунěн-çěрěн хěвеланăçнелле хăвалать.

Çаксем пурте пирěн чěресене савăнăç кÿреççě, пире ěçре çěнě çитěнÿсем тума хавхалантараççě.

Пирěн завод 18 уйăх хушши ěнтě хăйěн производство программине тултарса тата ирттерсе тултарса пырать.

Пирěн заводри малта пыракан çынсене икě хутчен правительство наградисем—орденсемпе медальсем парса пачлă тунă.

Тăшмана халě пěтěмпех аркатса тăкмалли çинчен, умра йывăр та татăклă çапăçусем пулассинчен Сталин юлташ асăрхаттарнине эпир асра тытатпăр. Совет халăхěн лăпланса лармалла мар.

Пирěн, совет патриочěсен, хамăрăн пěтěм техникăпа усă курса, пěтěм вăй-хăвата продукци кăларассине кунсерен ÿстерсе пынă çěре памалла. Эпир мěнчухлě продукци ытларах туса кăларатпăр, пирěн Хěрлě Çар гитлерла çарсене çěмěрсе тăкса совет çěршывне фашистла тискер кайăксенчен çавăн чухлě хăвăртрах тасатма пултарать.

Юлташсем—Чăваш республикинчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем тата служащисем!

Пирěн резервсем иксěлми пысăк!

Пирěн ěçкунěпе туллин усă курмалла, простойсене пěтермелле, çěнě рабочисене пурне те нормăна тултарса ěçлеме вěрентмелле, чěртаварсене, электроэнергине, топливăна перекетлěн тыткаламалла, оборудованисене мěн май пур таранах ěçлеттермелле.

Çěнě ресурссем шыраса, пирěн завод производствăна поточнăй методпа организацилет. Çакă вăл продукци туса кăларассине ÿстерме май парать. Пирěн завод коллективě, Октябрь уявě умěнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса, Чăваш республикинчи мěнпур предприятисене социализмлă ăмăрту ялавне çěнсе илме чěнет. çÿлерех çěклеме, Октябрьти Социализмлă Аслă революци 26 çул тултарнине çěнě çитěнÿсемпе кěтсе илессишěн кěрешме чěнет.

Тăван çěршыв умěнчи хамăрăн тивěçе асра тытса, пирěн завод коллективě çакăн пек обязательствăсем илет:

Октябрьти Социализмлă Аслă революци 26 çул тултарнă тěле турбинăна ěçе кěртсе электроэнерги пама тытăнмалла.

Ноябрěн 7-мěшě тěлне Верховнăй Главнокомандовани фондне пама планран ирттерсе пěр миллион тенкěлěх продукци туса кăлармалла.

Продукци пахалăхне лайăхлатассишěн ывăнма пěлмесěр кěрешмелле.

Ноябрěн 7-мěшě тěлне çěнěрен икě тěрлě продукци туса кăларма тытăнмалла.

Октябрь уйăхěнче икě пин тенкěлěх материалсем перекетлесе хăвармалла.

Октябрь уйăхěнче сентябрь уйăхěнчипе танлаштарсан ěçтухăçлăхне 1,5 процент ÿстермелле.

Хамăрăн вăйсене татах та ытларах пěтěçтерер, татах та пысăкрах çěкленÿпе ěçлер.

Сывă пултăр пирěн мухтавлă Тăван çěршыв!

Сывă пултăр пирěн хăватлă Хěрлě Çар!

Сывă пултăр пирěн çулпуç тата учитель, аслă полководец Сталин юлташ!

Завод коллективě хушнипе 11 çын алă пуснă.

ВĚРЕНÿ ÇУЛĚ АСЛĂ КЛАССЕНЧЕ ТЕ ĂНĂÇЛĂН ПУÇЛАНЧĚ

ЭЛĚК, октябрěн 1-мěшě. (**Хамăр корр.**). Районри вăтам тата туллимар вăтам шкулсем çěнě вěренÿ çулне лайăх хатěрленсе кěтсе илчěç. Вěсем пурте тенě пекех çителěклě таран вутă хатěрленě, шкул çурчěсене, партăсене, кăмакасемпе чÿречисене юсанă. Учительсем çителěклех. Юськассинчи туллимар вăтам шкулта çеç истори вěрентекен çитмест.

Çěнě вěренÿ çулне уйрăмăнах Таватри, Писěпри, Мăн Тукташри, Шарипкинăри туллимар вăтам шкулсем организованно кěтсе илчěç. Вěсем хěл каçма планран ирттерсе вутă тата вěри апат пěçерме продуктсем хатěрленě. Писěпри туллимар вăтам шкул коллективě планпа 130 кубометр вутă хатěрлес вырăнне 150 кубометр хатěрлесе турттарнă.

Х. ЛИСИН

* * *

КАЛИНИНО. Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачě В. Харитонов юлташ директор пулса ěçлекен педагогика училищи çěнě вěренÿ çулне лайăх хатěрленсе кěтсе илчě. Каникул вăхăтěнче вěренекенсемпе учительсен вăйěпе 700 кубометр ытла вутă хатěрленě.

Кăçал училищěре 8 класс пулать. Пурне те юсанă, çуса тасатнă тата портретсемпе илемлетнě. Доскасене сăрланă, партăсене юсанă.

Учительсемпе вěренекенсем валли столовăй пулать. Ун валли 47 тонна çěрулми, 3 тонна купăста тата ытти продуктсем те хатěрленě. Кунсăр пуçне кăçал 20 çын кěмелěх çěнě мунча тунă, 100 вěренекене вырнаçтармалăх общежити хатěрленě. Клуб тата библиотека ěçне çěнěрен йěркеленě. Иртнě çул библиотекăра пěтěмпе 45.000 кěнеке пулнă. Кăçал тата 1.500 тенкěлěх çěнě кěнекесем илнě. Клуба хаçат-журналсем 47 экземпляр килсе тăраççě.

Вěренÿ чухне кирлě наглояднăй пособисемпе кěнекесем, тетрадьсем тата ытти хатěрсем те училищěре çителěклех.

Б. ШОРНИКОВ

Чугун çул транспортне хěле хатěрлеççě

● Хусан чугун çулěн Трак разъезěнчи работниксем хěле хатěрленсе çитрěç. Разъездри чугун çула юсаса йěркеленě, стрелкăсем патне чул сарнă. Пурăнмалли тата служба çурчěсене юсанă, вěсен кантăкěсене лартнă, кăмакисене юсаса шуратнă. Хěл валли вутă çителěклě хатěрлесе хунă.

Хěле хатěрленес тěлěшпе стрелочниксем Ф. Степанов, Ножеников, Васильев, Н. Степанов юлташсем тимлěн ěçлерěç. Вěсем постсемпе стрелкăсене пěтěмпех хăйсем юсанă.

● Алтышево станцинче ěçлекенсем пурте хěле хатěрленес ěçсене активлăн хутшăнчěç. Вěсем тăрăшнипе станцири çулсене, стрелкăсене пěтěмпех юсаса çитерчě. Хěллехи вăхăтра кирлě ěç хатěрěсене çителěклě таран хатěрленě. Служба тата пурăнмалли çуртсем валли вутă та çителěклě турттарса хунă.

(ХАМĂР ИНФОР.)

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотисене пани

Сентябрĕн 30-мĕшĕнче Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева юлташ наградăланисен ушкăнне Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотисене пачĕ.

Ялхуçалăхĕнче çитĕнӳсем тунăшăн наградăланă ялхуçалăх специалисчĕсемпе ертсе пыракан работниксем çаксем Хисеплĕ грамотăсем илчĕç: С. И. Андреев—почвовед, ялхуçалăх наукисен кандидачĕ, Г. И. Калинцев—Чăвашсен ялхуçалăх институчĕн директорĕ, Н. И. Кондаков—ВКП(б) Обкомĕн ялхуçалăх отделĕн инструкторĕ, П. Ф. Кузьминская—«Красная Чувашия» хаçатăн ялхуçалăх отделĕн заведующийĕ, Н. Г. Малов—Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ.

Малалла ВКП(б) Обкомĕн ялхуçалăх отдел заведующийĕн заместителĕ Т. Е. Матвеев, ВКП(б) Обкомĕн ялхуçалăх отдел заведующийĕн заместителĕ А. А. Митрофанова, ВЛКСМ Обкомĕн секретарĕ П. М. Михайлов, Чăваш АССР Совнаркомĕн консультанчĕ А. А. Мирошник, Чăваш АССР Наркомземĕн производство управленийĕн начальникĕ А. Т. Титов, Чăваш АССР Совнарком председателĕн заместителĕ В. П. Чернов, Чăваш АССР Çĕрĕç халăх комиссарĕн заместителĕ И. А. Шорников, «Чăваш Коммуни» хаçат редакторĕ В. Я. Яковлев Хисеплĕ грамотăсем илчĕç.

Çавăн пекех государство Архивне тунăранпа 25 çул, Чăваш Архивне тунăранпа 20 çул тултарнă ятпа наградăланисене — Чăваш АССР НКВД архив отделĕн тата районсенчи архивсен работникĕсене — М. Н. Гвоздковăна, М. И. Мироновăна, И. И. Музыкантова, В. К. Сахаровăна, Р. С. Семенова, И. В. Сорокина, О. Я. Тавринăна та Хисеплĕ грамотăсем панă.

ВКП(б) Обкомĕн промышленноçпа транспорт отделĕн заведующине Д. Ф. Дубинина—чугун çул транспортне активлăн пулăшнăшăн, 17-мĕш дистанцинчи 5-мĕш околотокри старшии рабочине А. С. Степановăна—чугун çул транспортĕнче çине тăрса ĕçленĕшĕн Хисеплĕ грамотăсем панă.

Ун хыççăн чăлха фабрикин директорĕ Е. Я. Богуславская, табак фабрикин директорĕ И. Н. Чечеткин, предприятисене ăнăçлăн ертсе пынăшăн наградăланăскерсем, Хисеплĕ грамотăсем илчĕç.

Юлашкинчен Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ Андреева юлташ награда илнисене саламласа малашнехи ĕçре çитĕнӳсем тума ырă сунчĕ.

Ирĕке кăларнă районсене пулăшаççĕ

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсем валли выльăхсем сутăн илсе пама йышăннă постановление колхозниксем ырлаççĕ. Çĕрпӳ районĕнчи чылай колхозсем нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă районсене выльăхсем сутăн пама тытăнчĕç. Сентябрĕн 25-мĕшĕ тĕлне «Заготскота» 15 колхоз 29 пуç выльăх пырса сутнă. Вĕсенчен «Пожанар» колхоз 9 пуç, «Майăн 1-мĕшĕ» колхоз 7 пуç, Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз 5 пуç сутнă.

П. ПАВЛОВ.

Ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлемелли фронтовой уйăхлăх

Фронтовиксем пек ĕçлетпĕр

Пирĕн колхоз кăçал уйăх тырпула пухса кĕртес тĕлĕшпе районра малта пыракансенчен пĕри пулчĕ. Тырпула эпир ăнăçлăн пухса кĕртрĕмĕр. Паянхи куна кĕлтесене капана хывас, кантăр татас тата вăрлăхлăх клевер çулас ĕçсене те вĕçленĕ.

Колхоз ялхуçалăх çулне ăнăçлăн вĕçлесе пыни колхозниксемпе колхозницăсем тăрăшса ĕçленинчен килет. Вĕсем фронтовиксем пек ырмиканми ĕçлеççĕ. Манăн 2-мĕш бригадăра кашни колхозник тенĕ пекех ĕç нормине ирттерсе тултарать. Колхозниксем нимĕнле ĕçрен те парăнмаççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ бригада çуркуннерен пуçласах ĕçре ытти бригадăсенчен малта пырать, кусса çӳрекен хĕрлĕ ялава хăй аллинче çирĕппĕн тытса тăрать.

Тырă вырас ĕçе манăн бригада 5 кун хушшинче вĕçлерĕ, пăрçапа ясмăка (13 гектар) 3 кун хушшинче вырса пуçтартăмăр, эрне хушшинче пĕтĕм вырнă тырпула капана хывса пĕтертĕмĕр.

Анчах вырса пуçтарни—çур ĕç çеç-ха. Эпир авăн çапас ĕçе те тимлĕн тытăнтăмăр. Тырă вырса пуçтарас ĕçрен пушаннă колхозниксем пурте авăн çапма пуçларĕç. Çапла вара сентябрĕн малтанхи кунĕсенче манăн бригада ыраша, сĕлле пĕтĕмпех çапса пĕтерчĕ, çак кунсенче тата пăрçа çапса пĕтертĕмĕр, 3 гектар çинчи кантăра татса шыва хутрăмăр, вăрлăх валли хăварнă 2 гектар клевера та пухса кĕртрĕмĕр.

Государствăна тырă парассине кăçал колхоз авăн çапма тытăнсанах йĕркелерĕ. Хатĕрлев пунктне тырă леçме кашни бригадăрах ятарласа çынсем уйăрнă. Манăн бригадăра ку енĕпе ятарласах 4 çынран бригада организациленĕ, ăна колхозница Иванова ертсе пырать. Çак бригада кашни кун Вăрнара 12 центнер тырă турттарса тăчĕ. Бригада членĕсем тăрăшса ĕçленипе ĕнтĕ эпир государствăна тырă памалли обязательствăна та ытлашшипех пурнăçларăмăр.

Нумаях пулмасть, ВКП(б) райкомĕпе райисполком манăн ĕçе хакласа мана 400 тенкĕ укçа парса премилерĕç. Çакă вăл мана татах-та тухăçлăрах ĕçлеме хавхалантарать.

А. НИКОЛАЕВ,
Элĕк районĕнчи «Хĕрлĕ ялав» колхоз бригадирĕ.

Кĕрхи çĕртме юлса пырать

Шăхасан районĕнчи чылай колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсене хăвăрт та ăнăçлăн вĕçлесе пыраççĕ. Тăрăнти «Красный партизан» колхоз авăн çапса тата кĕрхи çĕртме туса пĕтерчĕ. Государство умĕнчи парăмсене пурне те парса татрĕ. Уйпуç Шĕкĕрти «Новый путь» колхозра иртнĕ çулсенче ĕçлемесĕр ларнă молотилкăна юсарĕç. Çав молотилкăпа халĕ кунĕн-çĕрĕн авăн çапаççĕ, кунне 30—40 центнер таран тырă çапса илеççĕ.

Анчах та ялхуçалăх ĕçĕсенче юлса пыракан колхозсем те пур-ха. Пуринчен ытларах кĕрхи çĕртме тăвас ĕç япăх пырать. Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕ панă график тăрăх, кĕрхи çĕртмене октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне туса пĕтермелле пулнă, анчах район плана пурĕ те 15 процент ытларах çеç пурнăçланă-ха. Чулкăмакари «Канаш» колхоз 190 гектар вырăнне 20 гектар, «Березовка» колхоз 470 гек. вырăнне 30 гектар çеç сухаланă. Туçи Çармăс ялсоветĕнчи «Оборона», «Красный луч» колхозсем кĕлте кӳрсе пĕтернĕ, вĕсен кулленех 20—25 лаша ахалех çӳреççĕ, апла пулин те, вĕсем кĕрхи çĕртме тума тытăнманта пĕрех-ха.

Малашне ку ĕç çине ытларах çаврăнса пăхмалла, фронтовой уйăхлăхра ялхуçалăхĕнчи пур тĕрлĕ ĕçсене те пурнăçласа çитерессишĕн кĕрешĕве анлăн сарса ямалла.

С. АСЛАН.

Ĕçкунĕ пуçне—3 килограмм тырă

Икĕ çул каялла, тăван çĕршыв çине тăшман килсе тапăнсан, «Труд» колхозран сахал мар вăй-питти арçынсем фронта тухса кайнă. Колхозри пĕтĕм ĕç хĕрарăмсемпе ваттисем çине тиенчĕ. Вĕсем кашниех колхозра вăя хурса ĕçлеме пулнă, колхоз хуçалăхне малашне те çирĕплетсе пыма тупа тунă.

Кăçал «Труд» колхоз членĕсем уйри тырпула вăхăтра тата пĕр тăккаламасăр пуçтарса кĕртме обязательство илнĕччĕ. Çанталăк япăх тăчĕ пулин те, хăйсен сăмахне колхозниксем тӳрре кăларчĕç: тырă вырас ĕçе вĕсем районра пуринчен малтан вĕçлерĕç, сентябрĕн 11-мĕшне пĕтĕм кĕлтесене капана хывса пĕтерчĕç. Çав вăхăт тĕлнеллех вăрлăхлăх клевера, мĕнпур пек кантăра пуçтарса кĕртрĕç.

Хĕрлĕ Çарăн чаплă çĕнтерĕвĕсем колхозниксен ĕçри хастарлăхне татах та ӳстерчĕç. Колхоз государство умĕнчи обязательствăсене тахçанах пурнăçланă, кăçалхи çулшăн тырă та, çĕрулми те пĕтĕмпех парса татнă. Çак кунсенче çĕрулми кăларса пĕтерчĕç. Çитес кунсенчех авăн çапса пĕтерме шутлаççĕ.

Обязательнăй йĕркепе тумалли ĕçкунĕсен минимумне тултарманни колхозра пĕр çын та çук, чылай колхозниксем минимума икĕ хут ирттерсе тултараççĕ. Пелагея Быкова, Ефросиния Грачева, Мария Иванова колхозницăсем сентябрĕн 13-мĕшне кашниех 194—200 ĕçкунĕ тунă. Тырă вырнă чухне вĕсем куллен нормăна 170—250 процент тултарса ĕçленĕ.

«Труд» колхозра çамрăк колхозниксем пример кăтартаççĕ. 16 çулхи Ирина Козловăпа Лиза Ефимова тата Мария Викторова тырă вырса кăна 74 ĕçкунĕ таран ĕçлесе илнĕ, пĕтĕмпе вара вĕсен 100 ĕçкунĕнчен те иртет. 13 çулхи Лидия Кузнецова тырă вырнă чухне куллен 2-шер ĕçкунĕ туса пынă, пĕтĕмпе вăл çуллахи вăхăтра 78 ĕçкунĕ тунă; 14 çулхи Николай Абонников—98 ĕçкунне çитернĕ. Пурте вĕсем халь шкула çӳреççĕ.

«Труд» колхоз членĕсем кăçал тăрăшса ĕçлени харама каймарĕ, вĕсем пысăк тухăçлă тырпул туса илчĕç. Малтанхи тырра вĕсем хатĕрлев пункчĕсене леçрĕç. Государство умĕнчи парăмсене парса татнă хыççăн колхозниксене аванс пама тытăнчĕç. Малтанлăха шутланă тăрăх, кăçал вĕсен ĕçкунĕ пуçне 3 килограмм ытла тырă валеçĕнмелле. Кунсăр пуçне тата вĕсем ĕçкунĕсем çине çĕрулми, ытти пахча-çимĕçсене те чылай илеççĕ. Аванс шучĕпе вĕсене колхоз 500-шер грамм çĕрулми валеçнĕ тата вĕсемшĕн государствăна çĕрулми парса татнă.

Х. ЛИСИН.

ЭЛĔК. (Хамăр корр.).

ТЫРПУЛ ХАТĔРЛЕМЕЛЛИ ПЛАНА СРОКЧЕН ПУРНĂÇА КĔРТЕССИШĔН ТАТА СТАЛИН ЮЛТАША ПУРИНЧЕН МАЛТАН РАПОРТ ПАМА ПРАВО ИЛЕССИШĔН РАЙОНСЕМ ХУШШИНЧЕ ПУÇЛАННĂ СОЦИАЛИЗМЛĂ ĂМĂРТУ ОКТЯБРĔН 1-МĔШĔ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА

Районсем	Миçемĕш вырăн йышăннă
Вăрнар	1
Етĕрне	2
Сĕнтĕрвăрри	3
Шупашкар	4
Канаш	5
Калинино	6
Советски	7
Октябрьски	8
Сĕнтĕр	9
Вăрмар	10
Çĕрпӳ	11
Шăхасан	12
Куславкка	13
Элĕк	14
Йĕпреç	15
Красноармейски	16
Ишлей	17
Улатăр	18
Хĕрлĕ Чутай	19
Тăвай	20
Çĕмĕрле	21
Комсомольски	22
Елчĕк	23
Чкаловски	24
Первомайски	25
Кувакино	26
Шăмăршă	27
Пăрачкав	28

* * *

Ăмăртура малта пыракан Вăрнар тата Етĕрне районĕсем хыççăн виççĕмĕш вырăн йышăнакан Сĕнтĕрвăрри районĕ государствăна тырă памалли çулталăкри плана 89,6 процент пурнăçланă.

35 колхозра авăн çапса пĕтернĕ

СĔНТĔР, октябрĕн 1-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлемелли фронтовой уйăхлăхра нумай колхозсем лайăх ĕçлеме тытăнчĕç. 35 колхоз авăн çапса пĕтерчĕç. 57 колхоз 1943 çулхи обязательствăсем тăрăх государствăна тырă парса татрĕç. Сĕнтĕр ялсоветĕнчи Чкалов ячĕпе тăракан тата Шомик ялсоветĕнчи «Колос» колхозсем государство умĕнчи пур обязательствăсене те парса татрĕç.

Т. ИВАНОВ.

Пĕр ĕнерен 3780 литр сĕт суса илнĕ

ВАРНАР. (Хамăр корр.). «Гигант» колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе малта пырать. Колхоз кăçал пур выльăхсем енĕпе те государство планĕсене ирттерсе тултарнă. Ĕне ферминче вĕсен кăçал 100 пуç вырăнне 136 пуç ĕне пур. Иртнĕ çул хипе танлаштарсан, ĕнесен тухăçлăхĕ чылай ӳснĕ. «Милка» ятлă ĕне кунне 14 литр сĕт парать. Ку ĕнерен 9 уйăх хушшинче 3780 литр сĕт суса илнĕ. Çавнашкалах «Пестренка» ĕне кунне 13 литр, «Милаш» ĕне 11 литр сĕт пăраççĕ.

Выльăхсене пăхакансем хăйсен ĕçне лайăх туса пыраççĕ. Викторова юлташ кăçал 8 ама сыснаран 120 çăвăр илнĕ, пурне те тĕрĕс пăхса çитĕнтернĕ. Пăрусене пăхакан А. Нахарова та кăçал 36 пăру пăхса çитĕнтерчĕ.

Колхозăн выльăхсем валли çурт-йĕрсем çителĕклĕ. Кăçал сыснасем валли икĕ вите тунă, ĕнесем пурăнакан витене юсанă, кантăкĕсене лартнă, шăтăк-çурăксене питĕрнĕ.

С. ШАДИН.

Ют çĕршывсенче

„Совет çарĕсен çапăçу хастарлăхĕ ӳссе пырать“

...нглири хаçатсемпе радио Хĕрлĕ Çар тапăнса пыни çинчен

ЛОНДОН, октябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Англире тухса тăракан хаçатсем тата радио Хĕрлĕ Çар çĕнтерӳллĕн малалла тапăнса пынине пысăк вырăна хураççĕ, ун çинчен нумай çыраççĕ. Рейтер агентствин вăрçă обозревателĕ Фергюссон çапла калать: Хĕрлĕ Çар Днепр шывĕ патне тухни вăрçă ĕçĕнче питĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать, тет. «Вырăс генералĕсем,—тесе çырать вăл,—пĕр вырăнтан тепĕр вырăна, ĕç ытларах ăнăçма пултаракан вырăна вăйлăн пырса çапас тĕлĕшпе хăйсем пысăк мастерсем пулса тăнине кăтартрĕç».

Лондонри радио хăйĕн пĕр обзорĕнче çапла калать: Хĕрлĕ Çар нумай вăхăт хушши малалла тапăнса пыни совет çарĕсен тапăнса пырас хастарлăхĕ ӳснĕçемĕн ӳссе пынине, Германи çарĕн шухăш-кăмăлĕсем начарланса пынине кăтартать, тет.

„Нимĕçсене хăйсем икĕ çул каярах пулнă вырăнсенех ывăтса янă“

Америка пичечĕ совет çарĕсен çĕнтерĕвĕ çинчен

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри хаçатсем Хĕрлĕ Çарăн çуллахи наступленийĕ çинчен нумай çыраççĕ. Хаçатсем наступлени питĕ анлăн пулса пынине, совет çарĕсем хăвăрт малалла куçса пынине, вĕсем паттăррăн та ăста çапăçнине паллă тăваççĕ. Америкăри çар обозревателĕ Уильям Ширер Сан-Францискăра радио тăрăх çапла каланă: «Вырăссен аслă наступленийĕ çак юлашки вăхăтра çав тери хăвăрттăн пулса пырать, эпир нимĕçсене вĕсем «çиçĕмле» вăрçă пуçласа янă хыççăнах икĕ çул каялла ăçта тăнă, çавăнта ывăтса янине те асăрхама ĕлкĕреймен».

Америкăри хаçатсем тата радио Хĕрлĕ Çар Смоленск хулине тытса илнине уйрăмах пысăк хак параççĕ.

„Гитлерла пропагандистсем Германи çарĕ çав тери пысăк поражени тӳснине пытарса хăвараймаççĕ“

Китайри хаçатсем Хĕрлĕ Çар çĕнтерĕвĕ çинчен

ЧУНЦИН, октябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Китайри хаçатсем совет çарĕн вăйлăн пыракан наступленийĕ çинчен хавасланса çыраççĕ. «Нацистла пропагандистсем мĕнле пăркалансан та,—тесе çырать «Чжунхуаибао» ятлă хаçат,—вĕсем Германи çарĕ тӳсекен çав тери пысăк поражение пытарса хăвараймаççĕ. Гитлеровецсем Российăри пысăк тата пĕчĕк хуласене хăйсен аллинче тытса тăма вăй çитерейменĕç, куна совет çарĕсем юлашки уйăхсенче питĕ пысăк территорие ирĕке кăларни те çирĕплетсе парать».

Поражени тӳсессинчен хăракан çынсене Германире арестлеççĕ тата асаплантарса вĕлереççĕ

ЖЕНЕВА, сентябрĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта илнĕ хыпарсем тăрăх, халăх хушшинче поражени тӳсессинчен хăракан шухăшсене сараççĕ тесе Германире пур çĕрте те нумай çынсене арестлеççĕ тата асаплантарса вĕлереççĕ. Нумай пулмасть 50 çулхи рабочие Август Неймана «поражени тӳсесси çинчен халăх хушшинче пивнойсенче сăмах сарса çӳренĕ» тесе асаплантарса вĕлернĕ. Гитлерла хаçатсем поражени çинчен калаçакан çынсене ниепле те каçару пулма пултараймасть, тесе асăрхаттараççĕ.

Гестапо темле вăйлă кĕрешет пулсан та, çав хирĕçле шухăш-кăмăлсемпе хаярлăх ӳссе пырать. «Фелькишер беобахтер» ятлă гитлерла хаçат предприятисенче ĕç тухăçлăхĕ пĕр чарăнмасăр чакса пынин сăлтавĕсене кăтартса парать, çак япаласем «рабочисем сиен тума тăрăшнинчен килеççĕ» тесе çирĕплетет.

«Тарăхакан мастерпа çилĕллĕ рабочи,—тесе çырать хаçат,—вĕсем хăйсен çилĕллĕ шухăш-кăмăлĕпе производствăри атмосферăна пăсаççĕ, тĕрĕс мар хушусем параççĕ, вĕсене ĕç интереслентермен пирки, вĕсем чи кирлĕ сроксене манса хăвараççĕ, хăйсен ĕçĕпе производство заданийĕсем çине çиелтен пăхаççĕ». Хаçат «предприятисенчи лару-тăру пирки тата пораженилле элементсене хирĕç тăтăклăн кĕрешес пирки» влассене хутшăнма хушать

Италири вăрçă ĕçĕсем

СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕМ НЕАПОЛЕ ИЛНĔ

ЛОНДОН, октябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен çарĕсем Неаполь хулине тытса илнĕ. Каялла чакса пынă май, нимĕçсем йăлтах çĕмĕрсе, ишĕлтерсе хăвараççĕ.

ÇУРÇĔР ИТАЛИРЕ ИТАЛЬЯНЕЦСЕН ЧАÇĔСЕМ ГЕРМАНИ ÇАРĔСЕМПЕ КĔРЕШЕÇÇĔ

Çурçĕр Италире Итали рабочийĕсем нимĕçсене хирĕç тăрасси вăйланнăçемĕн вăйланса пырать. Рабочисем нумайĕшĕ Германи çарĕсемпе вăрçакан итальянецсен чаçĕсемпе пĕрлешнĕ. Рабочисем нимĕçсен тылĕнче транспорта çĕмĕреççĕ, нимĕçсен патрулĕсене хĕçпăшалпа тапăнаççĕ, предприятисене ĕçлеме памаççĕ. (ТАСС).

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ БЕРЛИНРА 100 ФАБРИКĂПА ЗАВОДА ЯХĂН СИЕНЛЕНĔ

Самолет çинчен ӳкерсе илнĕ фотоӳкерчĕксем кăтартнă тăрăх, акăлчансен авиацийĕ Берлина пыра-пыра тапăннă чухне юлашки виçĕ хутĕнче хулари 100 фабрикăпа завода яхăн сиенленĕ, вăл шутран 30 предприятийĕ машинăсем тăвакан тата электротехнически заводсем. (ТАСС).

КĔСКЕН

● Бухарестра 37 румына арестленĕ. Вĕсем влаçа Антонеску шайкки хăйсен аллине çавăрса иличчен паллă ĕçре тăнă. Вĕсене халĕ Румынире нимĕçсене хирĕç кĕрешме партизансен отрячĕсем организацилеме хăтланнă тесе айăплаççĕ.

● Венгрире пĕр шкул та ĕçлемест. Шкул çуртĕсенчен нумайĕшĕнчен казармăсем тунă. Унсăр пуçне тата влаçсем хушнипе хуласенчи ачасене нумайĕшне яла куçарнă.

● Австрире гитлерла влаçсен приказне пичетлесе кăларнă. Çав приказ тăрăх 16—65 çулхи çынсен пурин те ĕç отделĕсене пырса çырăнмалла. Вĕсене пурне те «государство оборони тĕлĕшпе ĕçлеме» мобилизациленĕ. Ку регистраци иккĕмĕш хут пырать ĕнтĕ, мĕншĕн тесен пĕррĕмĕш хутĕнче, кăçалхи январь уйăхĕнче, çынсем нумайĕшĕ çавăн пек приказа пăхăнман, ĕç отделĕсене çырăнма пыман.

** Совет Союзĕпе Германи фронтĕнчи ĕçсене кура, паллă квислинговецсем нумайĕшĕ хăйсен ирĕкĕпех хăйсен вырăнĕсенчен тухаççĕ. Квислинг хăйĕн юлашки заявленийĕнче хăй те çакна ирĕксĕрех йышăннă: ман майлă ĕçлесе тăнă çынсем халĕ нумайĕшĕ хăйсен ĕçне пăрахса тарса çăлăнма пуçларĕç, тенĕ вăл. (ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Çамрăксене комсомола илес ĕçе вăйлатас пулать

ВЛКСМ Первомайски райкомĕ хăйĕн черетлĕ пленумĕнче комсомолăн районри организацинче çамрăксене комсомол ретне илес ĕç мĕнле пулса пынине сӳтсе-яврĕ.

ВЛКСМ Первомайски райкомĕ колхозсенчи çамрăксене политика тĕлĕшĕнчен вĕрентсе воспитани парас ĕçе кăçал чылай лайăхрах йĕркеленĕ. Уйхирте хастаррăн ĕçлекен чылай çамрăксене комсомол ретне илнĕ. 1942 çулта комсомолăн Первомайски организацийĕ хăйĕн ретне мĕн пурĕ те 90 çамрăка кăна явăçтарнă пулсан, кăçал 8 уйăх хушшинче ленинла-сталинла комсомол ретне çĕнĕрен 336 çамрăка илнĕ.

Чылай колхозсенче çамрăксен политикăллă активлăхĕ вăйлăн ӳсрĕ. Вĕсем колхозсем умĕнче тăракан задачăсене пурнăçа кĕртессишĕн тимлĕн кĕрешнине кăтартса пачĕç. Комсомолăн Нăрваш Шăхаль ялсоветĕнчи «Çĕнтерӳ» колхозри пуçламĕш организацине тырă вырса пухнă тапхăрта çĕнĕрен 6 çамрăк хутшăнчĕ. Комсомол ретне ĕçре палăрнă çамрăксем кĕчĕç. Комсомол организацин секретарĕ П. Табаков юлташ комсомолецсемпе çамрăксен кулленхи шухăш-кăмăлне аван пĕлсе тăрать, комсомолецсене ялхуçалăх ĕçĕсенчи ответлă участоксене вырнаçтарса тухать.

Çамрăк комсомолеца В. Григорьев юлташа колхозăн транспорт бригадине ертсе пыма хушнă. Вăл çак ĕçе комсомолеца тивĕçлĕ пек пурнăçларĕ. Транспорт бригадинче ĕçлеме вăл ялти чи хастарлă çамрăксене пухрĕ. Вĕсем кунне-çĕрне пĕлмесĕр тимлĕн ĕçлерĕç. Çапла вара «Çĕнтерӳ» колхоз государствăна тырă памалли 1943 çулхи плана районра пуринчен малтан пурнăçларĕ. Григорьев комсомолецăн ĕçне колхозниксем тивĕçлипех ырларĕç. Халĕ Григорьев юлташа колхозăн 3-мĕш бригадине ертсе пыма суйланă.

«Красное Именево» колхозри комсомол организаци кăçал хăйĕн ретне çĕнĕрен 25 çамрăка илнĕ. Çавăн пекех МТС-ри комсомол организацине те çĕнĕрен 63 çамрăк кĕнĕ. Колхозсенчи çитĕнсе пыракан çамрăксем фронтра тăван çĕршыва мĕнпур вăйпа пулăшассишĕн çунаççĕ. Вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене çĕнтерсе вĕсем тимлĕн, чăтăмлăн ĕçлеççĕ. «Çĕнтерӳ» колхозри комсомол организаци çамрăксене комсомол ретне илсе, вĕсене çийĕнчех ответлă ĕçсене вырнаçтарать, çапла вара вĕсен хастарлăхне ӳстерет. Кашни колхозрах комсомол организаци çавăн пек ĕçлени кирлĕ.

Анчах Первомайски районри чылай колхозсем 1943 çулхи ялхуçалăх ĕçĕсенче республикăри колхозсенчен кая юлса пыраççĕ. Çакăнта ВЛКСМ Первомайски организацийĕн те айĕпĕ пур. Комсомолăн хăшпĕр колхозсенчи организацийĕсем колхоз производствине çителĕксĕр хутшăнаççĕ. Хăшпĕр колхозсенчи организацисем çамрăксене комсомола илес ĕçе ячĕшĕн çеç туса пыраççĕ. Çакна фактсемпе çирĕплетсе кăтартма пулать.

«Красное Именево» колхоз иртнĕ ялхуçалăх çулĕнче районра малта пычĕ пулсан, кăçал кĕлтесене капана хывас, авăн çапса государствăна тырă парас ĕçре чăтма çук кая юлчĕ. ВЛКСМ райкомĕ «Красное Именево» колхозри комсомол организацине мухтать, кăçал кунта 25 çамрăк комсомол ретне кĕнине палăртать. Анчах комсомол организацийĕн ĕçĕ çӳнсе ларнине, çапла комсомола кĕнĕ çамрăксен колхоз производствинче ĕçлес кăмăлне пусарса пынине тӳрлетме шутламасть.

«Красное Именево» колхозăн итемĕ çинче «МК—1100» молотилка сехечĕ-сехечĕпе ĕçлемесĕр ларать, молотилка патĕнче ĕçлеме ĕç вăйĕ çитмест. Вăл ялта çук мар, анчах çынсем ĕçе тухмаççĕ. «Красное Именево» колхоз хирĕнче çĕмелсен тĕпне пачах пуçтармаççĕ, ку çеç те мар, çĕмел вырăнĕсене кĕлтесем те пăрахса хăвараççĕ. Çаксем йăлтах комсомолăн колхозри организацийĕ кирлĕ пек ĕçлеменнине кăтартаççĕ.

Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз Первомайски районра чи япăх ĕçлекен колхоз тесен те йăнăш пулмасть. Кунта комсомолецсем пур. Июль уйăхĕнче колхозри виçĕ çамрăк комсомола кĕме заявлени панă. Анчах паянхи куна çитсе те ВЛКСМ райкомĕн бюровĕ вĕсен ыйтăвне пăхса тухман.

Çамрăксене комсомола илес ответлă ĕçе комсомол организацисен ĕçне çирĕплетессипе çыхăнтарса пымалла. Колхоз фронтпа тăван çĕршыв ыйтнă пек ĕçлемесен, комсомолăн колхозри пуçламĕш организацийĕн йышĕ ӳссе пыни нимĕ те тăман пулĕччĕ.

ВЛКСМ Первомайски райкомĕн колхозсенчи комсомол организацийĕсен ĕçне çирĕплетмелле. Ялхуçалăх ĕçĕсене вĕçлемелли фронтовой уйăхлăхра районри комсомолăн хăй фронта тивĕçлĕ пек ĕçлеме пултарнине, çамрăксене ĕçре ертсе пыма пултарнине кăтартмалла.

Н. ПЕТРОВА.
(«Чăваш Коммуни» корр.).

ÇУЛИĔР ИНСТИТУЧĔСЕМПЕ ТЕХНИКУМĔСЕМ

пĕррĕмĕш курса вĕренме халĕ те илеççĕ.

Çулйĕр институтне 10-мĕш класран вĕренсе тухнисем чухлĕ пĕлекенсене, çулйĕр техникумĕсене 7-мĕш класран вĕренсе тухнисем чухлĕ пĕлекенсене илеççĕ.

Çулйĕр институчĕсем çак хуласенче пур: Саратовра, Омскра, Мускавра. Çулйĕр техникумĕсем — Свердловскра, Дон çинчи Ростовра, Мускавра.

Вĕренме кĕмелли условисем çинчен тĕплĕн çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Чебоксары, ул. Калинина, 51, Отдел кадров Управления строительства ГШО НКВД СССР.

Кӳлнĕ ЛАША урапи-мĕнĕпех ÇУХАЛНĂ. Çакăн пек паллăсем пур: тĕсĕ—çӳрен, çӳллĕшĕ—вăтам, çамки çинче—çăлтăр.

Пĕлекенсене çак адреспа пĕлтерме ыйтатпăр: Чувашская АССР, Канашский район, правление колхоза „Мотор“.

ЧĂВАШ АССР-ĔНЧИ ПУР ОРГАНИЗАЦИСЕНЕ ТЕ ПĔЛСЕ ТĂМА

Тарасасене юсама тата вĕсене техника тĕлĕшпе заказчиксем патĕнче майлаштарса тăма чăвашсен тарасасем юсакан завочĕн мастерĕсем кăна пултараççĕ, вĕсен ятарласа панă удостоверени пулмалла.

Тарасасене заводсăр пуçне кам та пулин урăххи юсанине пĕлсен, айăплисене администраци йĕркипе ответ тыттараççĕ, хăшпĕр чухне уголовнăй йĕркепе те айăплаççĕ.

Хăйсен тарасисене яланах юсавлă тытса тăрас текенсем заводпа договор тума пултараççĕ.

Виçепе тараса комитечĕн Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи уполномоченнăйĕ.
Чăвашсен тарасасем юсакан завочĕ.

Шупашкарта Грязевская Стрелкăра хваттерте тăнă чухне ЛАША ÇУХАЛЧĔ. Çак паллăсем пур: ăйăр, ячĕ—„Чернок“.

Пĕлекенсене çак адреспа пĕлтерме ыйтатпăр: Цивильский район, Чувашской АССР, Богатыревский сельсовет, Правлению колхоза имени Кирова.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн—4—26, парти пурнăç пайĕн—3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин — 0—23.

Типография №1 Управления полиграф. промышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 Ф. б. 53 88 п. л.

НТ 381